Ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче Çĕрпӳри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 2-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхи эрнинче 5-8 класс вĕренекенĕсем хушшинче «КРЕСТИКИ/НОЛИКИ» вăйă иртрĕ. Ку вăййа чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕсем «Чăваш енĕн паллă çыннисем» ятпа йĕркеленĕ. Ачасем вăйăра паллă çынсен ячĕсене, вĕсем мĕнпе палăрнине кăтартса пачĕç. Уйрăмах 5в, 6г, 7д классем аван хатĕрленни палăрчĕ, тепĕр вăйăра вĕсем пĕр-пĕрин хушшинче тупăшĕç. Çак вăйă ачасене пирĕн паллă ентешсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăклантарса яма пулăшни куçкĕрет.